25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1942
АПРЕЛЬ
16
КĔÇНЕРНИКУН
89 (6024) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Суракине хатĕрленес тĕлĕшпе пысăк тухăçлăхпа тата лайăх пахалăхпа ĕçленĕшĕн, ВКП(б) райкомĕсемпе ĕççынни депутачĕсен районсенчи Совечĕсен исполкомĕсем тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çаксене кĕртнĕ:

73. **Иван Васильевич Сучков**—Сĕнтĕр МТС-ĕнчи тракторсен бригадин бригадирĕ. Сучков юлташ ертсе пыракан бригада трактор ĕçĕсен планне çулсеренех ирттерсе тултарса пырать. Кăçалхи суракана валли çирлĕ тракторсене январĕ 1-мĕш тĕлне пĕтĕмпех юсаса çитернĕ [illegible]. Халĕ ку бригада ытти бригадăсене тракторсене юсать.

74. **Антонина Васильевна Кабурнина**—Сĕнтĕр МТС-ĕнчи трактористка. Кабурнина юлташ 1941 çулта трактор ĕçĕсен планне 128 процент тултарнă, 222 килограмм горючи перекетленĕ. Вăл хăйĕн тракторне кăçалхи суракине тухма 1941 çулта декабрь уйăхĕнчех юсаса хатĕрленĕ. Халĕ Кабурнина юлташ ытти тракторсене юсама пулăшать.

75. **Иван Артемьевич Арбузов**—Елчĕк МТС-ĕнчи тракторист. Арбузов юлташ 1942 çулта мартăн 15-мĕш тĕлне хăйĕн тракторне тата ун çумне ĕçлемелли машинăсене юсаса хатĕрленĕ.

76. **Никита Григорьевич Григорьев**—Елчĕк МТС-ĕнчи тракторист. Григорьев юлташ 1942 çулта мартăн 15-мĕш тĕлне хăйĕн тракторне, ялхуçалăх машинисене юсаса çитернĕ, халĕ вăл ытти тракторсене юсама пулăшать.

77. **Филипп Спиридонович Спиридонов**—Елчĕк МТС-ĕнчи тракторсен 15-мĕш бригадин бригадирĕ. Спиридонов юлташ ертсе пыракан бригада [illegible] 6 трактор юсанă [illegible] тракторсене [illegible] Çак бригада хăй вăйĕпех [illegible], государство средствисене пачах та расходламан.

Тăшмана аркатса тăкассишĕн, çĕнтерӳшĕн

Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне вырнаçтарас ĕç ăнăçлăн пулса пынă çинчен пĕлтерекен хыпарсем республикăри хуласемпе ялсенчен [illegible] Хĕрлĕ Чутай, Вăрмар, Калинински, Сĕнтĕр, Чкаловски тата ытти районсем тата Шупашкар хули заем сарас ĕçе вĕçлерĕç темелле. Апрелĕн 15-мĕш тĕлне республикăра пĕтĕмпе 50.560.000 тенкĕлĕх сарнă. Вăл шутран рабочисемпе служащисем хушшинче 20.989.000 тенкĕлĕх, колхозниксемпе единоличниксем хушшинче 20.278.000 тенкĕлĕх, колхозсемпе артельсене 9.299.000 тенкĕлĕх вырнаçтарнă. [illegible] Государствăн 1942 çулти заемне сарас ĕç малалла пулса пырать.

Иртнĕ çулсенчи пекех, заем сарас ĕç кăçал та пирĕн халăхăн патриотла туйăмне кăтартса паракан паха тĕслĕх пулса тăчĕ. Гитлерла вăрă-хурахсене яланлăхах пĕтерсе тăкас ĕмĕтпе пурăнакан пирĕн халăх отечественнăй вăрçă заемне пысăк çĕкленӳпе çырăнса илет. Çапла вара Хĕрлĕ Çарăн тылĕ çирĕп пулнине, совет халăхĕ нихăçанхи пек мар çирĕп пĕрлĕхлĕ пулнине пĕтĕм тĕнче тепĕр хут курса ĕненет. Тăшмана аркатса тăкассишĕн, çĕнтерӳшĕн пирĕн халăх хăйĕн пĕтĕм вăйне хурса кĕрешме хатĕр пулнине Германи фашисчĕсем курса тăчĕç.

Ĕççыннисен пурнăçĕнчи политикăлла пысăк çĕкленӳ Военнăй Заемăн ăнăçлăхне татса парать, заема кирлĕ чухлех тата ытларах та сарма лайăх майсем туса парать. Çавăнпа та ку енĕле тунă ӳсĕмсем пирĕн пуçа çавăрса ямалла мар. Заем сарас ĕçе пирĕн вăйлатсах пырас пулать.

Партипе совет тата профсоюз организацийĕсен умĕнче тăракан задачăсенчен пĕри вăл—заем çырăнас ĕçе ĕççыннисене пурне те пĕр çын юлмиччен явăçтарасси пулса тăрать. Ку ĕç ăнăçлă пулса пынă районсенче те заем çырăнас ĕçе хутшăнман рабочисемпе служащисем тата колхозниксем халĕ чылаях тупăнаççĕ-ха. Вĕсене çак питех те кирлĕ ĕçе хутшăнтарассишĕн тимлĕн ĕçлесе пырас пулать. Юлса пыракан районсен вара заем сарас ĕçе хăвăртлатас енĕпе пур мерăсене те йышăнас пулать. Ун пек районсем пирĕн пур-ха. Сăмахран, Улатăр, Йĕпреç, Канаш т. ыт. районсенче заем сарас ĕç халĕ тивĕçлĕ хăвăртлăхсемпех пулса пыраймасть-ха.

Кунпа пĕрлех çакна та асăрхаттарса [illegible] укçине çийĕнчех тӳлемелле тăвассишĕн тăрăшас пулать. Мĕншĕн тесен çавăн пек туни государствăна пысăк усă кӳрет.

Ĕççыннисем хушшинче заема ăнăçлăн вырнаçтарасси—пирĕн халăхи вăхăтри пысăк задача пулса тăрать. Вăл ĕçе пирĕн тĕплĕн туса пымалла. Кирек мĕнле ситменлĕхсемпе йăнăшсене çийĕнчех тӳрлетсе пырас пулать. Сăмахран, хăшпĕр вырăнсенче Военнăй Заема кăлармалли Условисене пĕтĕмĕшпех ăнланса çитменни тĕл пулкалать. Рабочи е колхозник заема 325 тенкĕлĕх çырăнатăп тесе пĕлтерсен, заем уполномоченнăйĕ нимĕн шухăшласа тăмасăрах çав цифрăна çырса хурать. Анчах ку ĕнтĕ тĕрĕс пулмасть. Мĕншĕн тесен, 25 тата 10 тенкĕлĕх облигацисене государство расчет тунă чухне усă курма çеç кăларнă. Çавăнпа та çав рабочин е колхозникăн заема 350 тенкĕлĕх е 300 тенкĕлĕх çырăнас пулать. Кун пек ситменлĕхсем нумай мар пулин те, вĕсене хăвăрт тӳрлетсе пыни кирлĕ.

Отечественнăй аслă вăрçă тапхăрĕ пирĕн çине пысăк ответлăх хучĕ. Çак ответлăха ăнланса илнĕ кашни ĕççынни Государствăна хăйĕн перекетленĕ укçине кивçен парса пулăшма тăрăшать. Заем сарас ĕç татах та ăнăçлăрах пулса пытăр тесен, агитаторсен хăйсен ăнлантару ĕçне халĕ нихăçанхи пек мар вăйлăн сарса ямалла. Килхуçи хĕрарăмĕсем, алăстаçсем хушшинче, уйрăмах заем сарас ĕç юлса пынă çĕрте агитаторăн тĕрĕс сăмахĕ илтĕнмелле. Çакă ĕнтĕ вĕсен хальхи вăхăтри чи хисеплĕ ĕçĕ пулса тăрать.

Государствăн Военнăй Заемне сарас ĕçри пысăк çĕкленĕве тăтăшах ӳстерсе, вăйлатса пырар!

Колхозниксемпе колхозницăсем! Военнăй Заема хастарлăн çырăнса илсе, чаплă Хĕрлĕ Çарăн вăй-хăватне тата ытларах тĕреклетер!

УКÇИНЕ ÇИЙĔНЧЕХ ТӲЛЕÇÇĔ

СĔНТĔР. Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемĕ тухнă ятпа Ильинка ялсоветне кĕрекен пур колхозсенче те колхозниксен митингĕсем пулса иртрĕç. Колхозниксемпе колхозницăсем тăван çĕршывăн оборонине тĕреклетме каякан çĕнĕ заем тухнине хавасланса кĕтсе илчĕç. Вĕсем çĕнĕ заема пысăк хаваслăхпа çырăнса укçине те çийĕнчех тӳлеççĕ. Паянхи куна ялсоветĕпе çĕнĕ заема 47.390 тенкĕлĕх сарса, укçине 46.650 тенкĕ тӳленĕ.

«Краснофлотец» колхоз членĕ Ольга Мочалова юлташ çĕнĕ заема 450 тенкĕлĕх çырăнчĕ, укçине те çавăнтах тӳлесе татрĕ. Заема çырăнса вăл çапла каларĕ:

— Паттăр Хĕрлĕ Çара ытларах та ытларах самолетсем, танксем, тупăсем т. ыт. хĕçпăшалсем те кирлĕ. Заема çырăннă пирĕн укça çавсене тума каять те ĕнтĕ. Эпĕ çĕнĕ заема 450 тенкĕлĕх çырăнатăп,—терĕ.

Ялсоветĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче çĕнĕ заем тухнă ятпа массăллă-агитациллĕ ĕç сарăлса пырать. Кашни колхозрах стена хаçачĕсем кăларнă.

М. ИСАЕВ,
Л. СЕДЛОВА.

* * *

СĔНТĔР ЯЛСОВЕЧĔ. Ялсоветĕнчи служащисемпе колхозниксем СССР Совнаркомĕ çĕнĕ заем кăларасси çинчен йышăннă постановленине радио тăрăх итлесенех ăна çырăнма пуçларĕç. Ялсовечĕпе заема 66.300 тенкĕлĕх çырăнса укçине çийĕнчех тӳлесе татрĕç. Вăл шутран «Çĕнĕ пурнăç» колхоз членĕсем 25.000 тенкĕлĕх çырăнса укçине те тӳлесе татрĕç. Районра вĕсем 1-мĕш номерлĕ квитанци илчĕç.

ПЫСĂК ХАВХАЛАНУПА

ИШЛЕЙ. (**Апрелĕн 14 мĕш. Телефонпа**). Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне кăларнине Ишлей машиннă-тракторнăй станцин коллективĕ пысăк хавхаланупа кĕтсе илчĕ. Партипе правительствăн постановленине итлен хыççăн кĕске митинг пулса иртрĕ. Ун хыççăн пĕтĕм коллектив заем çырăнма тытăнчĕ. 60 тракторист пурĕ 35.300 тенкĕлĕх çырăннă, вăл шутран 2.250 тенкĕ çавăнтах тӳленĕ. МТС-ри служащисем пурĕ 16 çын 8.150 тенкĕлĕх çырăннă. Трактор бригадисен бригадирĕсем А. Петров — 1.100 тенкĕлĕх, Т. Ефимова, М. Фомин 1.050-шар тенкĕлĕх çырăнса укçине те 400—500-шер тенкĕ тӳлерĕç.

А. СТЕПАНОВ.
МТС политотделĕн начальникĕ.

Совет патриотизмĕн çĕнĕ çĕнтерĕвĕ

ЙĔПРЕÇ. (**Телефон тăрăх**). Районри ĕççыннисем Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне пысăк хаваслăхпа çырăнаççĕ. Апрелĕн 13-мĕшĕнче çĕнĕ заема кăларасси çинчен Правительство постановленине радио тăрăх панă хыççăнах колхозсенче, предприятисемпе учрежденисенче заема çырăнса илес ĕç анлăн сарăлса кайрĕ. Икĕ сехет хушшинчех районра çĕнĕ заема пĕтĕмпе 325.000 тенкĕлĕх сарнă. «Большевик» колхозри колхозниксемпе колхозницăсем 24.135 тенкĕлĕх çырăнса укçине 21.300 тенкĕ хывнă. Колхоз председателĕ М. Егоров, колхозник Т. Раймов 1.500-шер тенкĕлĕх çырăнса укçине те парса татнă. М. Башков, Ф. Исаков, Т. Сарамов колхозниксем 1000-шер тенкĕлĕх çырăнса укçине те çавăнтах хывнă. Хĕрарăмсем колхозра пысăк вăй пулса тăраççĕ. Вĕсем заем çырăнса илес ĕçе те хастарлăн хутшăнаççĕ. А. Михайлова К Ванеркина, З. Илларионова колхозницăсем 700-шер тенкĕлĕх çырăнса укçине те парса татнă.

Йĕпреç поселокĕнчи килхуçи хĕрарăмĕсем çĕршыв оборонине тĕреклетме пулăшаççĕ. Килхуçи хĕрарăмĕ Е. Моховцева юлташ заема 100 тенкĕлĕх çырăннă та укçине тӳлесе çапла каланă: «Манăн икĕ ывăл тăшмана хирĕç хĕçпăшалпа кĕрешеççĕ. Эпĕ тăшмана хамăн тенкĕсемпе çапатăп», тенĕ.

Йĕпреçри «Кооплеспром» артелĕнчи 40 çын 20.760 тенкĕлĕх çырăнса илнĕ. Ĕçукçи фончĕпе танлаштарсан, çакă вăл икĕ уйăхри ĕçукçи чухлĕ пулать. Машиннă-тракторнăй станцинче те заема çырăнас ĕç ăнăçлăн пулса пырать. Яковлев юлташ 1.500 тенкĕлĕх çырăнса укçине 700 тенкĕ хывнă, П. Семенов юлташ 1.200 тенкĕлĕх çырăнса укçине 500 тенкĕ хывнă, унăн ывăлĕ те 1.200 тенкĕлĕх çырăнса укçине 1000 тенкĕ хывнă. Районри колхоз активĕ заем çырăнас ĕçре пример кăтартса пырать. «Правда» колхоз председателĕ Карпов юлташ 1.500 тенкĕлĕх çырăнса укçине те çавăнтах парса татнă.

Заема ăнăçлăн вырнаçтарса, пирĕн ĕççыннисем Германи фашизмне çапса аркатма Хĕрлĕ Çара пулăшаççĕ.

Д. САЛАЕВ.
Районри перекет кассин заведующийĕ.

ЗАЕМ ĂНĂÇЛĂН САРĂЛАТЬ

СĔНТĔР, апрелĕн 14-мĕш. (**Телефонпа**). Районра отечественнăй аслă вăрçăн заемне сарас ĕç анлăн сарăлса пырать. Район центрĕнчи рабочисемпе служащисем, пурте пĕр çын пек пулса, заема хăйсен уйăхри ĕçукçи чухлĕ çырăннă.

Заем сарас ĕç колхозниксем хушшинче те ăнăçлăн пырать. Чкалов ячĕпе тăракан колхозра 125 çын 19.360 тенкĕлĕх çырăнса укçине çийĕнчех тӳлесе татнă. Подписка укçине Пашалукасси ялсоветне кĕрекен «Красный Октябрь» колхозра 39.625 тенкĕ, Янăм ялсоветне кĕрекен «Новая жизнь» колхозра 28.775 тенкĕ пухнă.

Заем укçине çийĕнчех тӳлес тĕлĕшпе ватă колхозниксем пример кăтартаççĕ. Тĕслĕхрен, «Новая жизнь» колхозри И. Митрофанов, виçĕ красноармеецăн ашшĕ, заема 900 тенкĕлĕх çырăнса укçине те тӳлерĕ.

Г. АКИМОВ.

ГИТЛЕРИЗМА ТĔП ТУМАЛЛИ ЗАЕМ

Шупашкарти пир-авăр фабрикинче ĕçлекен рабочисемпе служащисем тата инженерсемпе техниксем радио тăрăх 1942 çулти военнăй заема кăларасси çинчен партипе правительство йышăннă постановлени итленĕ хыççăнах çĕнĕ заема çырăнса илме пуçларĕç. Цехсенче пулса иртнĕ митингсенче рабочисем, служащисем çĕнĕ заема пĕр кăмăллăн ырласа йышăнчĕç. Çĕнĕ заем этемлĕхĕн тăшманне—гитлеризма тĕп тунă çĕре кайнине лайăх ăнланса, кашни рабочи, работница ăна уйăхри ĕçукçинчен ытларах çырăнса илеççĕ.

ФЗО шкулĕнче вĕренекенсен А Корнеева ертсе пыракан групни çĕнĕ заема 1.800 тенкĕлĕх çырăнса илчĕ. Вĕсен уйăхри ĕçукçин хисепĕ 1.152 тенкĕ. Ĕнер каçхи сменăра тата кăнтăрла ĕçленĕ инженерсем, техниксем тата служащисем 17 пин тенкĕлĕх çырăнчĕç.

Ткачиха О. С. Чекмарева Военнăй Заема 300 тенкĕлĕх çырăнса илчĕ. Арлакан цех начальникĕ А. Рычаков юлташ ĕçукçинчен çĕр тенкĕ ирттерсе çĕнĕ заема 1000 тенкĕлĕх çырăнчĕ.

Апрелĕн 13-мĕшĕнче çĕнĕ заема рабочисемпе служащисен 46 проценчĕ çырăнса илчĕ. Вĕсем пурĕ 54 пин тенкĕлĕх çырăнчĕç.

А. АЛТ[illegible]

РЕСПУБЛИКĂН СТОЛИЦИНЧЕ

Шупашкарти предприятисемпе учрежденисенче Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне вырнаçтарас ĕç ăнăçлăн пырать. Ĕнерхи кун тĕлне хулари ĕççыннисем хушшинче заема мĕнпурĕ 5.812.000 тенкĕлĕх сарнă.

* * *

СССР Совнаркомĕ 1942 çулти Военнăй Заема кăларасси çинчен йышăннă постановление радио тăрăх илтсенех Бенский юлташ директор пулса тăракан заводри цехсенче митингсем пулса иртнĕ. Рабочисемпе служащисем çĕнĕ заема пысăк хавхаланупа çырăнса илме пуçланă. Инженерсемпе техниксем тата цех начальникĕсем пурте уйăхри ĕçукçинчен кая мар çырăннă. Çамрăк работницăсем: Верниковская, Филимонова, Лемих юлташсем çырăнса илнĕ заемăн сумми 3 уйăхри ĕçукçинчен те иртет.

Завод коллективĕ хушшинче заем сарас ĕçе малтанхи икĕ кун хушшинчех вĕçленĕ. Коллектив заема уйăхри ĕçукçин 110 проценчĕ чухлĕ çырăннă.

Заем кампанийĕ пуçланнă май, рабочисем хушшинче массăллă ăнлантару ĕçне вăйлатнă. Агитаторсемпе вулавçăсем 1942 çулти Военнăй Заем çинчен калаçусем ирттереççĕ. Цехсенче стена хаçачĕсемпе бюллетеньсем тухса тăраççĕ.

* * *

Хулари «Красная Волга» колхозра ĕçлеме пултаракансенчен вăрçă вăхăтĕнчи заема çырăнмасăр пĕр çын та юлман. Колхозниксемпе колхозницăсем заема 5.200 тенкĕлĕх çырăнса, укçине 3.100 тенкĕ тӳленĕ. Колхоз хăй заемăн процентлă кăларăмне виçĕ пинлĕх çырăннă, вăл шутран çуррине сберкассăна кусарнă.

* * *

Табак фабрикинче ĕçлекенсем хушшинче çĕнĕ заема 22.835 тенкĕлĕх сарнă, вăл ĕçукçи фончĕн 101,7 проценчĕ чухлĕ пулать.

Малта пыракан работницăсем: Семенцова, Андреева тата Макарова юлташсем уйăх çурăри ĕçукçи чухлĕ çырăннă.

* * *

Заем вырнаçтарас ĕç эрех заводĕнчи рабочисемпе служащисем хушшинче ăнăçлăн иртнĕ. Унта уйăхри ĕçукçи фондĕнчен ирттерсе 38.905 тенкĕлĕх çырăннă. Уйрăмăнах М. Павлова техничкăн патриотизмне палăртмалла. Вăл çĕнĕ заема 200 тенкĕлĕх çырăнса укçине те çийĕнчех тӳлесе татнă.

* * *

Тир-сăран комбиначĕн коллективĕ хушшинче çĕнĕ заема 33.580 тенкĕлĕх сарнă. Заем сарас ĕç малалла пырать.

Цветной металлурги наркомачĕн çирĕп сплавсен Мускаври комбиначĕн работникĕсене наградăлани

Боеприпассем туса кăларас тĕлĕшпе Правительство панă заданисене кăтартуллăн пурнăçа кĕртсе пынăшăн СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх Цветной металлурги наркомачĕн çирĕп сплавсен Мускаври комбиначĕн работникĕсене наградăланă.

Ленин орденĕпе: комбинат директорне **А. И. Андрюшина**, прессовщиксен бригадирне **А. Г. Виноградова**, мастера **В. А. Еремина** наградăланă.

Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе—5 çынна,

Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе—5 çынна;

«Знак почета» орденĕпе — 9 çынна;

«За трудовую доблесть» медальпе—14 çынна;

«За трудовое отличие» медальпе — 16 çынна наградăланă. (ТАСС).

Американ ССР Союзĕнчи Посолĕ господин В. Стендли верительнăй грамотăсем пани

Апрелĕн 14-мĕшĕнче СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин юлташ Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен ССР Союзĕнчи Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолне В. Стендли господина йышăннă. В. Стендли М. И. Калинина хăйĕн верительнăй грамотисене панă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Апрелĕн 14-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Апрелĕн 14-мĕшĕнче фронтăн хăшпĕр участокĕсенче пирĕн войскăсем наступлениллĕ çапăçусем туса пынă тата халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ.

Апрелĕн 13-мĕшĕнче нимĕçсен 17 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 6 самолет пĕтнĕ.

* * *

Апрелĕн 13-мĕшĕнче пирĕн авиацин чаçĕсем противникăн войскисемпе грузсем турттарса пыракан 30 яхăн автомашина, боеприпассем тиенĕ 25 лав, 9 полевой тата зенитнăй оруди, зенитнăй пулеметсен 2 точкине, 16 миномет пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, тăшманăн пехотине 3 ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть çĕрлехи çапăçура нимĕçсен 268-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 488-мĕш пехотнăй полкăн 2-мĕш батальонне пĕтерсе тăкнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсен 400 çити вилли выртса юлнă.

* * *

Ленинград фрончĕн уйрăм участокĕсенче кĕрешекен пирĕн чаçсем икĕ кун хушшинче тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 2.200 çынна пĕтерсе тăкнă. Çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: 4 оруди, 6 пулемет тата пулеметсен запасри 28 стволне, 3 миномет, автоматсем, пистолетсем, винтовкăсем, 62.000 винтовка патронĕ, 1.100 ручной граната, 700 мина. 2 радиостанци, артиллерипе продовольстви склачĕсем.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен танкистсем тата артиллеристсемпе пехотинецсем нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 400 çынна яхăн пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн боецсем, гитлеровецсене халăх пурăнакан пунктран хĕссе кăларса, противникран 6 оруди, 300 снаряд, 5 пулемет, 2 радиостанци, винтовкăсемпе автоматсем нумай тата боеприпассен складне тытса илнĕ.

* * *

Пирĕн 11 разведчик (Калинин фрончĕ) тăшманăн тылĕнче пĕр çул хĕрринче засада тунă та нимĕçсен 22 автоматчикне пĕтерсе тăкнă. Засадăна асăрхаса илсен, противник пирĕн боецсене хирĕç 30 çынран тăракан отряд янă. Пĕр-пĕрин çине пенĕ хушăра пирĕн разведчиксем татах 10 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Пирĕн разведчиксем хăйсен подразделенине пурте тĕрĕс-тĕкелех таврăннă.

* * *

Военфельдшер Руденко, тăшман персе тăнине пăхмасăрах, çапăçу хирĕнчен аманнă боецсемпе командирсене 47 çынна, вĕсен хĕçпăшалĕпе пĕрлех, илсе тухнă.

* * *

Ленинград облаçĕн нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенчен пĕринче В. тата Т. юлташсем командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕсем нимĕçсен фашистла войскисем йышăнса тăракан халăх пурăнакан пункт çине пырса тапăннă. Партизансем нимĕçсене 50 çынна ытла пĕтерсе тăкнă, вăл шутра 2 офицер. Нимĕçсен 3 салтакне тыткăна илнĕ. Танксене хирĕç пемелли гранатăсем пăрахса, партизансем тăшманăн боеприпассем хунă складне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Нимĕçсен вилнĕ лейтенанчĕ Генрих Раумлер çумĕнче вăл хăйĕн шкулти учителĕ Рудольф Вебер патне яма çырнă çырăва тупнă. Çав çырури уйрăм сыпăксене илсе пичетлетпĕр: «Июльте эпир вăрçă мĕнле хăвăрт пуçланнă, çавăн пекех хăвăрт пĕтет тесе шухăшлаттăмăр... Мĕн тери хавасланса, хастарланса кайса карттă çине пăхаттăмăр эпир ун чухне, вăрçăн пĕрремĕш эрнинче, иккĕмĕш эрнинче — уйăх хушшинче пирĕн войскăсем миçе километр малалла кайнине шутлаттăмăр. Акă нумаях та пулмасть, Ратцель лейтенантпа иккĕн эпир походри малтанхи кунсене аса илтĕмĕр.

Ратцель çапла каларĕ: «Эпир кунта 273 кун вăрçатпăр. Халĕ шутласа тухсан, Российăра эпир унччен пулса иртнĕ мĕнпур походсенчинчен нумай вăраххăнрах куçса пынă», терĕ. Ку ĕнтĕ чăн факт..: Халĕ эпир намăс курса каялла чакатпăр, хамăр юнпа вырăссен уйхирне пăваратпăр. Салтаксем нимĕн йĕркине те ăнланса илеймеççĕ, ывăнса, тарăхса çитнĕ. Вĕсем кун пекех пулсан нумаях чăтса тăраяс çук. Хăй ăшĕнче кашни унтер-офицер фельдфебеле кураймасть, фельдфебелĕ офицера кураймасть. Салтакĕ вара пурне те—унтер-офицертан пуçласа генерал таранах кураймасть... Пĕр пĕчĕк шанчăк кăна юлать, салтаксем пĕр-пĕринпе калаçса татăлса нихăçан та пĕр шухăшлă пулаяс çук».

Апрелĕн 15-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Апрелĕн 15-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтра нимĕнле пăллă улшăнусемех те пулман.

* * *

Калинин фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн чаçсем противника хирĕç малалла çапăçса пынă. Иртнĕ талăк хушшинче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 850 çынна çити вилсе тата аманса пĕтнĕ. Тыткăна илнисем тата трофейăсем пур. Тепĕр участокра Юдинцев юлташ командир пулса ертсе пыракан часть нимĕçсене малалла хĕссе пынă. Противникăнне 10 пулемет, 2 миномет, автоматсем, винтовкăсем тата ытти тĕрлĕ хĕçпăшалсем тытса илнĕ. Зенитнăй хĕçпăшалсенчен персе, çапăçу хирĕçтĕлĕнче нимĕçсен «Ю-88» йышши самолетне ӳкернĕ.

* * *

Кавалерин гвардейски чаçĕ (Хĕвеланăç фрончĕ) халăх пурăнакан 4 пункта йышăнса илнĕ. Противник чĕрĕ вăйпа техника тĕлĕшĕнчен пысăк сухатусем тӳснĕ. Фронтăн тепĕр участокĕнче пирĕн боецсем тытса илнĕ высотана каялла тавăрас тесе, гитлеровецсем атакăна 16 танк кĕртсе янă. Нимĕçсен танкĕсене пирĕн противотанковăй артиллери вăйлă вут-çулăмпа кĕтсе илнĕ. 5 машина сухатса хăварса, тăшманăн каялла чакма лекнĕ. Тăшманăн танкĕсенчен пĕрин экипажне тыткăна илнĕ.

* * *

Совет разведчикĕсен групи, противникăн тылне кĕрсе кайса, тăшманăн дзотне атакăланă. Кĕтмен çĕртен пырса тапăннипе сехрисем хăпнă нимĕçсене пĕтерсе тăкнă. Разведчиксем пĕр станковăй пулемет, 3 автомат, 7 винтовка тата 2.000 патрон ытла тытса илнĕ.

* * *

Кузнецов сержантăн зенитнăй оруди расчечĕ, виçĕ хутчен персе, нимĕçсен «Ю-88» йышши самолетне ӳкернĕ. Çав самолет пирĕн войскăсен боевой йĕркисем çине бомбăсем пăрахма хатланнă пулнă.

* * *

Партизансен «За родину» ятлă отрячĕ, Смоленск облаçĕн оккупациленĕ районĕсенче кĕрешекенскер, нимĕç оккупанчĕсене кăнтăрла та, çĕрле те канăç памасть. Юлашки вăхăтра отряд темиçе ăнăçлă операци туса ирттернĕ, çав операцисенче нимĕçсен 205 салтакне, 6 офицерне тата 20 полицейскине пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен штабĕсемпе çар чаçĕсем хушшинчи çыхăнăва партизансем темиçе хутчен те татнă. Юлашки вăхăтри çапăçусенче кăна партизансем гитлеровецсенчен 3 пулемет, 6 автомат, 36 винтовка, 5 бинокль тата 10.000 яхăн патрон тытса илнĕ.

* * *

Ленинград фрончĕн участокĕсенчен пĕринче нимĕçсен вилнĕ салтакĕ çумĕнче вăл Германие ярса ĕлкĕреймен çырăва тупнă. Çырура çапла каланă: «Пирĕн татах çĕнĕ вырăна куçма лекрĕ. Ĕлĕкрех эпир малалла куçаттăмăр, халĕ ĕнтĕ каялла чакатпăр. Пире хамăрăннисенчен татса уйăрнăччĕ, тăватă кун хушши эпир вырăссен ункинче пултăмăр, пирĕн çимелли нимĕн те çукчĕ. Вилнĕ лаша тупрăмăр та апат пĕçерсе çирĕмĕр. Эпир йывăр вăхăта тӳссе ирттеретпĕр. Вăрçă пире пурне те йĕрĕнтерсе çитерчĕ, çакă хăрушла пурнăçа малалла тăсма никамăн та нимĕнле кăмăл та çук. Çапла ĕнтĕ, хаклă Вилли, пирĕн господинсем йăнăш турĕç пулас, çавăншăн ĕнтĕ пирĕн тӳлеме лекет».

* * *

Нимĕçсен 8-мĕш дивизийĕн 28-мĕш полкĕнчен тыткăна лекнĕ салтак Иоганн Гиллер çапла каласа панă: «Фронта килсе çитсен тепĕр кунран пирĕн полка çапăçăва хăваласа кĕртрĕç. Малтанхи çапăçурах эпир пысăк сухатусем тӳсрĕмĕр. Салтаксен виллисем, аманнисене турттарса каякан транспортсен вĕçихĕррисĕр картисем салтаксене çавтери хытă хăратса ӳкерчĕç. Нумайăшĕсем çапăçăва кĕме отказ пачĕç. Темиçе салтака вырăнтах персе пăрахрĕç».

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн постановленийĕ

Питех те палăрса тăракан изобретенисемшĕн тата производствăллă ĕçĕн меточĕсене тĕпренех çĕнетсе лайăхлатнăшăн Сталинла премисем парасси çинчен

(Малалли, пуçламăшĕ ĕнерхи номерте)

16. Владимир Владимирович **Михайлова**, СССР Наукăсен Академийĕн Уралри филиалĕн лаборатори руководительне, Алексей Алексеевич **Сигова**, Григорий Васильевич **Гайдукова**, СССР Наукăсен Академийĕн Уралри филиалĕн научнăй сотрудникĕсене, Борис Константинович **Высоцкие**, главуралмет инженерне, Виктор Иосифович **Герасимова**, Нижний Тагилри Куйбышев ячĕпе тăракан заводăн инженерне, **Марк Харитонович Лукашенкăна**, Серов ячĕпе тăракан заводăн доменнăй цех начальникне, Николай Иванович **Тимошина** тата Александр Иванович **Сухорукова**, главспецсталь инженерĕсене, домна кăмакисенче углеродистăй феррохром шăратса кăлармалли технологиллĕ процеса çĕнĕлле йĕркелесе производствăна кĕртсе пынăшăн.

17. Григорий Иванович **Носова**, Магнитогорскри металлурги комбиначĕн директорне, Николай Андреевич **Рыженкăна**, Василий Алексеевич **Смирнова**, çав комбинатрах ĕçлекен работникĕсене, Семен Израилевич **Сахина**, Евгений Ефимович **Левина**, 48-мĕш номерлĕ наукăпа тĕпчев институчĕн сотрудникĕсене, Федор Николаевич **Пирские**, Наркомчерметăн технически отделĕн работникне, Дмитрий Яковлевич **Бадягина**, Ижорскри Ленин орденлĕ заводăн главнăй металлургне, тата Дмитрий Михайлович **Поликарпова**, Наркомтанкпром инженерне, броня валли çĕнĕ маркăллă хурçă туса хатĕрленĕшĕн тата унăн процесне пуçарса янăшăн.

18. Александр Павлович **Писаренкăна**, Владимир Иосифович **Алексеенкăна**, Константин Константинович **Гаврикова**, Владимир Михайлович **Рогова**, Иван Васильевич **Плотникова**, Александр Михайлович **Хомутова** тата Михаил Георгиевич **Мараховские**, тир-сăрана улăштармалли япаласем туса кăларакан промышленноçăн Центральнăй наукăпа тĕпчев институчĕн сотрудникĕсене, Семен Сергеевич **Розанова**, сăран атă-пушмак промышленноçĕн Центральнăй наукăпа тĕпчев лабораторийĕн сотрудникне, Петр Денисович **Александрова**, СССР Наркомлегпромĕн тир-сăрана улăштармалли япаласем туса кăларас енĕпе ĕçлекен Главнăй управлени начальникне, Василий Васильевич **Щеголева** тата Петр Иванович **Белкина**, военнăй инженерсене, тир-сăрана улăштармалли япаласем шухăшласа кăларнăшăн тата вĕсене промышленноçа кĕртсе пынăшăн.

19. Борис Моисеевич **Рыбака**, Нефть промышленность Халăх Комиссарĕн заместительне, Александр Ионович **Скоблона**, Наркомнефть производственно-технически отделĕн начальник заместительне, Виктор Степанович **Федорова**, «Грознефтезаводы» трестăн управляющине, Иван Григорьевич **Пригорнева**, çав трестрах ĕçлекен главнăй инженера, Аркадий Андреевич **Маркина**, «Азнефтезаводы» трестăн главнăй инженерне, Виктор Степанович **Гутыре**, Азербайджанри наукăпа тĕпчев институчĕн директорĕн наука енĕпе ĕçлекен заместительне, Михаил Аронович **Горелика**, нефтьрен ытти япаласем туса кăларакан Бакури Сталин ячĕпе тăракан заводăн главнăй инженерне, Лев Борисович **Самойлова**, çав заводрах главнăй лаборатори начальникĕн заместителĕ пулса ĕçлекенскере, халь ĕçлекен установкăсемпе заводсенчех авиаци валли бензин туса кăларассине ӳстермелли метода шыраса тупса ăна промышленноçа кĕртсе пынăшăн.

20. Алексей Ильич **Семиволоса**, Кривой Рогри тимĕр руди кăларакан бассейнри бурщика, халĕ Наркомчерметăн Бакальски рудникĕсенче ĕçлекенскере, тимĕр рудине пăраласа кăларас ĕç меслетне çĕнетсе йĕркелесе ăна руда кăларакан промышленноçа кĕртсе пынăшăн,—унăн меслечĕ ĕç тухăçлăхне вăйлăн çĕклеме тата руда кăларассине нумай ӳстерме май парать.

21. Сергей Яковлевич **Сокелова**, Ленинградри В. И. Ульянов (Ленин) ячĕпе тăракан электрохимически институтăн профессорне, ультра-акустика дефектоскопи методне шухăшласа кăларнăшăн.

22. Сергей Павлович **Стрелкова**, Михаил Арсентьевич **Ефимова**, Александр Прокофьевич **Якушева** тата Виктор Александрович **Преображенские**, ГСКБ—47 конструкторĕсене, çĕнĕ типлă авиабомбăсен конструкцине туса хатĕрленĕшĕн тата ăна производствăна кĕртсе пынăшăн.

23. Иван Павлович **Шебанова**, 454-мĕш номерлĕ заводăн ОКБ главнăй конструкторне, Владимир Иванович **Ермилова**, Николай Иванович **Столпоеские**, çав ОКБ-рах ĕçлекен сотрудникĕсене, тата Юрий Кириллович **Белецкие**, 2-мĕш рангри военинженера, самолетсем валли çĕнĕ йышши хĕçпăшал туса хатĕрлесе ăна производствăна кĕртсе пынăшăн.

24. Алексей Павлович **Шехурдина**, ССР Союзĕн Кăнтăр-Хĕвелтухăçĕнчи тĕпштырă хуçалăхĕн наукăпа тĕпчев институчĕн лаборатори заведующине, Лютесценс с—65 тата Лютесценс—758 йышши тулă сорчĕсем тунăшăн.

25. Илларион Павлович **Янкина**, «Красноуралмедьруда» трестăн «Красногвардейская» шахтинче ĕçлекен бу-рильщике, пăхăр рудине кăларас ĕçе нумай забойлă тата нумай оперфораторлă ĕç меслетне ĕçе кĕртсе пынăшăн,—унăн меслечĕ ĕç тухăçлăхне вăйлăн çĕклеме тата пăхăр руди кăларассине чылай ӳстерме май парать.

Виççĕмĕш степеньлĕ премии—50.000 тенкĕлĕх

1. Евлампий Иванович **Антоновские**, Балхашри пăхăр шăратакан заводăн инженерне, Наум Соломонович **Гревера** тата Нил Пудович **Асеева**, Ленинградри горнăй институтăн профессорĕсене, Коунрадски рудниксенчи пăхăр рудинчен промышленноçра молибден йышлăн туса кăлармалли метода шыраса тупнăшăн.

2. Александр Алексеевич **Беднякова**, КБ—30 начальникне, Михаил Иванович **Пузырькова**, Николай Петрович **Белякова** тата Ефим Михайлович **Виценине**, КБ—30 конструкторĕсене, çĕнĕ йышши граната шухăшласа кăларнăшăн.

3. Николай Петрович **Богородицкие**, техникăллă наукăсен докторне, 34-мĕш номерлĕ наукăпа тĕпчев институчĕн старши инженерне, радиотехника валли изоляци тумалли «Ультрафарфор» ятлă çĕнĕ материал шухăшласа кăларнăшăн.

4. Георгий Константинович **Берескова**, Анатолий Гаврилович **Амелина**, Уралри хими енĕпе ĕçлекен наукăпа тĕпчев институчĕн работникĕсене, контактнăй аппаратсене лайăхлатмалли меслете шыраса тупнăшăн тата контактнăй лĕкĕрт кислотине туса кăларас ĕçĕн çĕнĕ схемине туса хатĕрленĕшĕн.

5. Евгений Михайлович **Грумберга**, Государственнăй оптически институтăн научнăй сотрудникне, куçа курăнман çутă пайăркисене микроскоппа пăхмалли çĕнĕ меслете шухăшласа кăларнăшăн.

6. Петр Петрович **Будникова**, УССР Наукăсен Академийĕн действительнăй членне, Сергей Петрович **Зорна**, Башкирири строительнăй материалсен наукăпа тĕпчев институчĕн сектор заведующине, ангидритлă цемент тумалли меслете шыраса тупнăшăн.

7. Иван Александрович **Веребрюсова**, 2-мĕш рангри военинженера, Емельян Михайлович **Сердюна**, 49-мĕш номерлĕ наукăпа тĕпчев институчĕн работникне, Федор Федорович **Иванушкина**, Виктор Васильевич **Александрова**, Василий Федосеевич **Печурина** тата Леонид Григорьевич **Шатихина**, çав институтрах ĕçлекен сотрудникĕсене, подводнăй лодкăсем валли аппаратура тунăшăн.

8. Федор Федорович **Вульфа**, Уралри индустриальнăй институтăн профессорне, Лев Эмануилович **Лосева**, Леонид Александрович **Бугарева**, Анатолий Акиндинович **Евтютова**, Виктор Сергеевич **Чемоданова**, Виктор Яковлевич **Чупракова**, Уралри алюмини завочĕн работникĕсене, тата Андрей Андреевич **Гайлита**, Наркомцветметăн Главалюмини главнăй инженерне, Уралри боксит сене тасатса шăратмалли меслете шыраса тупса ăна ĕçе кĕртсе пынăшăн.

9. Виталий Андреевич **Грачева**, Горькири автомобильсем тăвакан Молотов ячĕпе тăракан заводăн конструкторне, автомашинăпа автоброне машинăн çĕнĕ конструкцийĕсене туса хатĕрленĕшĕн.

10. Рубен Багдасарович **Давыдова**, СССР Наукăсен Академийĕн докторантне, юн плазмине нумай вăхăт хушши сыхласа усрамалли меслете шыраса тупнăшăн.

11. Иван Иванович **Картукова**, 145-мĕш номерлĕ заводăн главнăй конструкторне, Федор Прокофьевич **Заварзина**, çав заводрах ĕçлекен главнăй конструкторăн заместительне, авиаци валли çĕнĕ типлă хĕçпăшал туса хатĕрленĕшĕн.

12. Исаак Константинович **Кикоина**, Владимир Семенович **Обухова**, Сергей Васильевич **Губаре**, СССР Наукăсен Академийĕн Уралри филиалĕн сотрудникĕсене, пысăк вăйлă постояннăй токсене виçмелли çĕнĕ система шухăшласа кăларнăшăн.

13. Андрей Иванович **Киприанова**, УССР Наукăсен Академийĕн член-корреспондентне, УССР Наукăсен Академийĕн хими институчĕн директор заместительне, кино промышленноçĕ валли фотосенсибилизаторсем туса кăларассине йĕркелесе алла илнĕшĕн.

14. Николай Иванович **Краснопевцева**, техникăллă наукăсен кандидатне, Наркомпищепромăн çăкăр пĕçерес енĕпе ĕçлекен наукăпа тĕпчев институчĕн физико-теплотехнически лабораторийĕн заведующине, Виктор Николаевич **Загрова**, çав институтрах ĕçлекен инженер-конструктора, çăкăр пĕçермелли автоматлă кăмакасен конструкцине туса хатĕрленĕшĕн.

15. Иван Николаевич **Назарова**, СССР Наукăсен Академийĕн органикăллă хими лабораторийĕн заведующине, çилĕм йышши çĕнĕ япаласем туса хатĕрленĕшĕн.

16. Владимир Сергеевич **Ниценкăна**, 183-мĕш номерлĕ заводăн броньăсем туса кăларакан отделĕн начальникне, Георгий Федорович **Засецкие**, 264-мĕш номерлĕ заводăн броньăсем туса кăларакан отделĕн начальникне, Владимир Борисович **Суслова**, 183-мĕш номерлĕ заводăн броньăсем туса кăларакан цехĕн начальникне, Андрей Сергеевич **Завьялова**, НИИ—48 директорне, Иосиф Соломонович **Кватера**, Уралмашзаводри металлурги отделĕн начальник заместительне, Дмитрий Яковлевич **Бадягина**, Уралмашзаводăн главнăй конструкторне, Никита Иванович **Петрова**, 200-мĕш номерлĕ заводăн металлурги лабораторийĕн начальникне, Василий Семенович **Емельянова**, Наркомсудпромăн Главнăй управлени начальникĕ пулнăскере, танксем валли шăтарса тунă башньăсен производствин технологине çĕнетсе йĕркеленĕшĕн.

17. Леонид Пантелеймонович **Пономаренкăна**, Владимир Емельянович **Савицкие**, Георгий Дмитриевич **Тишина**, Модест Александрович **Покровские**, Петр Павлович **Григориадиса**, чугунçул транспорчĕн наукăпа тĕпчев институчĕн работникĕсене, чугунçулсем çинче автоблокировкăн çамăллатнă системине шухăшласа кăларнăшăн.

18. Антон Александрович **Рожновские**, НКПС-ăн пневматически водоснабжени конторин главнăй инженерне, паровозсем çине шыв илес ĕçе хăвăртлатмалли хатĕре шухăшласа кăларнăшăн.

19. Захар Александрович **Роговина**, Мускаври Менделеев ячĕпе тăракан химико-технологически институтăн профессорне, Этта Абрамовна **Блехмана**, Алексей Алексеевич **Копьева**, пир-авăр промышленность институчĕн научнăй сотрудникĕсене, вут-кăвара тата шыва тӳсекен пирсем тумалли метода шыраса тупнăшăн.

20. Борис Захарович **Рудоя**, СССР Наукăсен Академийĕн çĕр айĕнчен çунакан япаласем кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен институчĕн старши научнăй сотрудникне, бензин пахалăхне пĕлмелли методпа прибора шухăшласа кăларнăшăн.

21. Сергей Константинович **Рябова**, 2-мĕш рангри инженер-капитана, тинĕс орудийĕсен тӳсĕмлĕхне ӳстермелли метод шухăшласа кăларнăшăн.

22. Григорий Абрамович **Сонкина**, НАТИ-ри автомобильсен отделĕн главнăй конструкторне, вездеход конструкцине туса хатĕрленĕшĕн.

23. Александр Илларионович **Тудоровские**, СССР Наукăсен Академийĕн член-корреспондентне, Георгий Георгиевич **Слюсарева**, Государственнăй оптически институтăн профессорне, авиаци валли çĕнĕ типлă фотографи объективĕсен конструкцине шухăшласа кăларса туса хатĕрленĕшĕн.

24. Сергей Николаевич **Ушакова**, Хусанти Киров ячĕпе тăракан химико-технологически институтăн профессорне, винил-ацетат производствин процесне пĕтĕçтерсе йĕркеленĕшĕн тата пластмассăсем валли кирлĕ фенола улăштармалли япаласем шыраса тупнăшăн.

25. Михаил Максимович **Файнберга**, Михаил Алексеевич **Проскурнина**, Карпов ячĕпе тăракан физикăпа хими институчĕн работникĕсене, çĕнĕ типлă взрыватель шухăшласа кăларнăшăн.

26. Антон Михайлович **Фролов-Багреева**, Краснодарти виноделипе виноградарство институчĕн профессорне, шампански эрехсем туса хатĕрлемелли çĕнĕ аппаратурăпа çĕнĕ метод шухăшласа кăларнăшăн.

27. Владимир Яковлевич **Шатерникова**, 156-мĕш номерлĕ заводăн спецбюро начальникне, Александр Михайлович **Булычева**, Петр Сергеевич **Котенкина** тата Мужаедин Абдурашидович **Ханкишнева**, çав бюрорах ĕçлекен инженерсене, самолета пушартан хӳтĕлемелли система шухăшласа кăларнăшăн.

28. Александр Александрович **Шмука**, ялхуçалăх наукисен Пĕтĕм Союзри Ленин ячĕпе тăракан Академийĕн действительнăй членне, СССР Наукăсен Академийĕн биохими институчĕн лаборатори руководительне, махорка чĕр таварĕнчен лимон кислоти туса кăлармалли меслете шыраса тупнăшăн.

29. Петр Павлович **Шумилова**, Ролен Арсентьевич **Иоаннесяна**, Эйюб Измайлович **Тагиева**, Моисей Тимофеевич **Гульманына**, Наркомнефть инженерĕсене, тарăн скважинăсем пăраланă çĕрте шывпа ĕçлекен нумай пусăмлă турбина шухăшласа кăларнăшăн.

Асăрхаттарни: СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ «наукăпа изобретени, искусствăпа литература енĕпе 1941 çулта питех те палăракан ĕçсем тунăшăн Сталинла премисем памалла тăвасси çинчен» 1941 çулти январĕн 11-мĕшĕнче йышăннă постановлени кăштах улăштарса, СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çак постановленире питех те палăрса тăракан изобретенисемшĕн кăна мар, производствăллă ĕçĕн меточĕсене тĕпренех лайăхлатса çĕнетнĕшĕн те Сталинла премисем пама палăртнă, çав премисене çакăн чухлĕ памалла тунă: а) питех те палăрса тăракан изобретенисемшĕн тата производствăллă ĕçĕн меточĕсене тĕпренех çĕнетсе лайăхлатнăшăн:

Пĕрремĕш степеньлĕ премии—150.000 тенкĕлĕх.

Иккĕмĕш степеньлĕ премии—100.000 тенкĕлĕх.

Виççĕмĕш степеньлĕ премии—50.000 тенкĕлĕх.

Кунсăр пуçне, СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çак постановленире пĕрремĕш степеньлĕ 9 премии тата иккĕмĕш степеньлĕ 5 премии çĕнĕрен хушса пама палăртнă.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. СТАЛИН.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Ĕçĕсен Управляющийĕ Я. ЧАДАЕВ.

Мускав, Кремль. 1942 çулти апрелĕн 10-мĕш.

Криппс радио тăрăх Инди халăхне сăмах тухса калани

ЛОНДОН, апрелĕн 12-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Криппс Делире Инди халăхне радио тăрăх сăмах тухса каланă. Çар кабинечĕ хушнипе Индие илсе килнĕ деклараци проектне Инди лидерĕсем йышăнманнине палăртса, Криппс çав лидерсемпе калаçнă чухне тухса тăнă хирĕçӳсем çинчен каланă. Калаçусем татăлнин тĕп сăлтавĕ, — тенĕ Криппс,—хальхи вăхăтра Индин самоуправленине тата оборонине организацилес ыйтупа тухса тăнă хирĕçӳсем пулчĕç. Пĕрремĕш йывăрлăх—оборона ыйтăвĕ. Темиçе вуншар çулсем хушшинче Индие хӳтĕлес ĕçе Англи правительстви туса тăнă. Çак задачăна юлашки 20 çул хушшинче главнокомандующи пурнăçласа пынă, вăл çав вăхăтрах тата вице-король çумĕнчи исполнительнăй советăн членĕ пулса тăнă. Инди çарĕ (унта Англипе Индин çар чаçĕсем кĕреççĕ), флот тата авиаци пĕрлĕхлĕ верховнăй командовани пăхăнса тăраççĕ.

Инди лидерĕсем манпа калаçнă чухне Индие хӳтĕлес ĕçе индиецсен аллине памалла тата совет членĕ пулса тăракан главнокомандующи вырăнне индиеца лартмалла тесе карарĕç. Индие хӳтĕлес ĕçе Англин туса тăма тивĕçлĕ тесе тата союзник пулса тăракан Америка умĕнче хăйĕн тивĕçлĕхне пурнăçлас тесе, Инди лидерĕсем çавăн пек ыйтнине Англи правительстви йышăнмарĕ, мĕншĕн тесессĕн çав требовани пурнăçа кĕртес тесен нумай вăхăт хушши ĕçлесе нумай улшăнусем тумалла, тăшман хапха умĕнех тăнă чухне тата çĕршыва хӳтĕлес ĕçе питĕ хăвăрт туса пыма кирлĕ вăхăтра çавăн пек вăрах хăтланни ĕçе чăрмантарма пултарать. Англи правительстви çарăн çĕнĕ ведомствине тума сĕнчĕ, çав ведомство вăл главнокомандующин генеральнăй штабĕн ĕçĕсене туса пымалла, оборонăн ытти ыйтăвĕсене вара исполнительнăй советăн членĕ аллине—индиец аллине памаллаччĕ.

— Çак сĕнӳсем,—тенĕ Криппс, — хăш пĕр партисене килĕшрĕç, анчах та вĕсене конгресс йышăнмарĕ.

Калаçусем татăлнин тĕп сăлтавĕ тесе Криппс Индие вăрçă вăхăтĕнче мĕнле формăпа тытса тăрас ыйту тĕлĕшпе тухса тăнă хирĕçӳсене шутлать. Конгресăн лидерĕсем конституцие халех улăштарма карарĕç. Вĕсем тата Инди правительствине вице-король е Англи правительстви тĕрĕслесе ан тăтăр, терĕç. Криппс—Англи правительстви çав требованисене йышăнма пултараймарĕ, мĕншĕн тесен вĕсем Индири йышлăрах вак халăхсен интересĕсене пырса тивнĕ пулĕччĕç, тенĕ.

Юлашкинчен Криппс çапла каланă:

— Тахçантанпа шанмасăр тăни ытла та вăйлă пулчĕ, эпир каласса татăлаймарăмăр, тенĕ.

Криппс Инди халăхне, самоуправленипе оборона тĕлĕшпе тĕрлĕ шухăшланине пăхмасăр, вăрçă ĕçĕсене вăйлатма, агрессие хирĕç пĕрлешсе кĕрешес ĕçе хутшăнма чĕннĕ.

Черчилль общинăсен палатинче Инди океанĕ çинчи операцисем çинчен панă ответ

ЛОНДОН, апрелĕн 14-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çакна пĕлтерет: Черчилль общинăсен палатин ларăвĕнче тумаях пулмасть Инди океанĕ çинче пулса иртнĕ вăрçă операцийĕсем çинчен кĕскен каласа панă. Çак операцисенче Англин «Дорсетшайр», «Корнуэлл» ятлă икĕ крейсерĕ тата «Гермес» ятлă авианосецĕ пĕтнĕ. Крейсерсен водоизмещенийĕ 10.000-шер тонна пулнă, вĕсем çинче 8 дюймлă орудисем пулнă. Черчилль пĕлтернĕ тăрăх, японецсен Англи вăйĕсенчен йышлăрах тинĕс-çар вăйĕсем апрелĕн 4-мĕшĕнче Инди океанне пырса кĕнине асăрханă пулнă, вĕсем Цейлон утравĕ патнелле пынă. Японин тинĕс-çар вăйĕсен йышĕнче сахалтан та виçĕ линкор, пилĕк авианосец, йывăр тата çăмăл крейсерсем, эсминецсен флотилийĕ пулнă. Вĕсем хушшинче пĕри 16 дюймлă орудисемпе хĕçпăшаллантарнă тата юсаса çĕнетнĕ «Магато» йышши линкор пулнă. Коломбопа Тринкомали гаванĕсем çине японецсем сывлăшран пырса хаяррăн тапăннă. Икĕ пунктĕнче те Англи истребителĕсемпе зенитнăй батарейăсем Японин тапăнакан самолечĕсене пысăк сухатусем кӳнĕ. Çак вăхăтра Англи авиацийĕ те, японецсем тӳснĕ чухлех мар пулин те, чылай пысăк сухатусем тӳснĕ. Кунсăр пуçне тинĕс çыранĕнчи укреплениесем тата гаваньре тăракан хăшпĕр карапсем сиенленнĕ. «Дорсетшайр», «Корнуэлл» крейсерсем тата «Гермес» авианосец гаваньрен японецсем тапăничченех маларах тухса кайнă пулнă, вĕсене противник самолечĕсем уçă тинĕсре тапăнса путарнă.

Черчилль малалла çакна палăртнă: хăшпĕр çинче е авианосецсем çинче вырăнаçса тăракан самолетсем Англин тинĕсре çӳрекен пур карапĕсене те сывлăшран хӳтĕлесе çитерме пултараймаççĕ. Англин ун пек хӳтĕленмен нумай карапĕсем тинĕссем тăрăх куллене вуншарăн-вуншарăн çӳреççĕ. Хăраса тăрса тинĕс çине тухмасан, суту-илӳ пароходĕсене конвойласа ăсатас ĕçе те, тинĕс çинчи вăрçă операцийĕсене те пурнăçлама май çук, тенĕ Черчилль.

Малайăпа Сингапурти ĕçсем çинчен ыйтни çине ответлесе, Черчилль çапла каланă: Гордон Беннетт генерал докладне илтĕмĕр, вăл доклада халлĕхе пичетлесе кăларма юрамасть-ха, тенĕ. Çакăнпа пĕрлех Черчилль çитес икĕ эрне хушшинче общинăсен палатин хупă ларăвĕнче вăрçă ĕçĕсен хальхи лару-тăрăвĕ çинчен доклад туса парасси çинчен пĕлтернĕ.

О'Нейл консерватор «Дорсетшайр» тата «Корнуэлл» крейсерсене путарни çинчен сăмах хускатса, Черчилльрен: Англин сывлăшри çар вăйĕсем Японии авианосецĕсемпе карапĕсем çине тапăнма пултарайман-ши, тапăннă пулсан, вĕсем противника мĕн тума пултарнă, тесе ыйтнă. Ку ыйтăва хирĕç Черчилль çапла пĕлтернĕ: японецсем Коломбо çине тапăнсан, англичансен торпедăллă самолечĕсем вĕсен авианосецĕсене атакăланă. Анчах та çил-тăвăллă тата аялтан шăвакан пĕлĕтлĕ çанталăк тăннă пирки, çав кун Англин самолечĕсем противникпа тĕл пулса çапăçайман. Тринкомалире тăракан торпедăллă самолетсем, çавăн пекех тата унти истребительсемпе бомбардировщиксем те, противникпа хаяррăн тытăçса çапăçнă. Японецсен пĕр авианосецĕ патнех бомбăсем ӳкнĕ, анчах та вăл мĕнле сиенленни паллă мар. Противникăн çакăн та пырса тапăннă самолечĕсене пурне те пекех е персе антарнă, е сиенлесе стройран кăларнă.

ГЕРМАНИ ХАЛĂХĔ ВĂРÇĂ ПИРКИ ӲПКЕЛЕШНИНЧЕН ГЕББЕЛЬСĂН СЕХРИ ХĂПНĂ

СТАМБУЛ, апрелĕн 14-мĕш. (ТАСС). «Дас Рейх» хаçат Геббельс статьине пичетлесе кăларнă. Ку статьяран Германи халăхĕ вăрçă пирки тата çак вăрçăран килекен йывăрлăхсем пирки ӳпкелешесси гитлеровецсене хăратмаллах ӳссе пыни палăрать. «Пирĕн хушăра, — тесе çырать Геббельс, — Германия вăрçакан вăрçа мĕнпур енчен пăхса хакламa пĕлмен çынсем те пур-ха. Вĕсем вăрçă йывăрлăхĕсене çавтери пысăклатса кăтартса, чăн япалана чăн марринчен уйăрма та, çавăн пекех тата паянхи куна пула тухса тăракан явление вăхăтпа çыхăнман явленисенчен уйăрма та пултараймаççĕ».

Геббельс нимĕç халăхне фронтри салтаксен ахаль граждăнла халăх тӳснинчен «миллион хут ытларах» тӳсме лекни çинчен астутарнипе лăплантарма тăрăшать. «Пирĕн салтаксене хумхатаканни мĕнпурĕ те çĕркăмрăкĕпе çĕрулми çитменни çеç пулсан, е чугунçулпа савăнса çӳреме çукки, хуларти транспортпа çӳреме çукки е тата магазинсенче ялан пĕр майлă ответ пани — «урăх çук» тени çеç пăлхантарать пулсан, вĕсем хăйсене райра пурăннă пекех туйнă пулĕччĕç», — тесе çырать Геббельс.

Геббельса Германи халăхĕн шухăш-кăмăлĕ текех ӳксе пыни хытах хăратать. «Хамăр çĕршыва юлнисен кĕске вăхăтлăх отпуска таврăннă салтаксемпе хăйсен нушисем çинчен калаçма юрамасть» — тесе хушать вăл малалла. «Салтаксене фронта татах та ытларах салхуланса, ытлашши шухăшсемпе пăшăрханса таврăнмалла тума юрамасть», — тесе вĕрентет Геббельс. — Çакна «Салтаксем патне çыру çырнă чухне те асрах тытмалла. Хăйсен кулленхи ĕçĕсемпе нушисем çинчен пĕр айвансемпе хавшак чĕреллĕ çынсем çеç çырса яма пултараççĕ» — тесе шăртланса çуйăхать Геббельс. Унтан вăл, Германири «çынсенчен нумайĕшĕн шухăш-кăмăл вăйĕ юлашки виçене çитиех хĕрсе çитни» çинчен асăрхаттарса, нимĕç халăхне йывăрлăхсем çинчен калаçассинчен пăрăнмашкăн хушать.

Германире айăпланă çынсене халăх умĕнче асаплантарса вĕлермелли йĕрке тунă

СТОКГОЛЬМ, апрелĕн 14-мĕш. (ТАСС). «Нюа даглихт аллеханда» хаçатăн Берлинри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Германире гитлеровецсем халăха хăратас сăлтавпа вăтам ĕмĕрсенчи террор меслечĕсемпе усă курма тытăнаççĕ. Халиччен унта — «Государствăна хирĕç тăракан элемент» тесе айăплакан нумай йышлă çынсене персе е пуçĕсене касса вĕлернĕ. Хальхи вăхăтран пуçласа «питех те пысăк айăплă çынсене» «халăха хăратас сăлтавпа» хула площачĕсенче халăх умĕнче çакса вĕлермелле тăваççĕ.

Неру Индия вăрçă çине мĕнле пăхни çинчен калани

ЛОНДОН, апрелĕн 13-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Индин нацилле конгресĕн лидерĕ Неру пресс-конференцире çапла каланă: Германипе Япония вăрçăра çĕнтерсе пĕтĕм тĕнчере хăйсем пуç пулса тăрас пулсан, çакă пĕтĕм тĕнчешĕн трагеди пулнă пулĕччĕ, тенĕ.

«Мана,—тенĕ Неру,—ютçĕршыв çарĕсем Индишĕн çапăçнă вăхăтра, японецсем Индие çĕмĕрсе кĕрес тапхăрта эпĕ алла усса ларма пултарасси çинчен е пĕтĕм халăх хăйсен килĕсенче нимĕн тумасăр ларасси çинчен шухăшлани йĕрĕнтерет. Англичансем Индие эксплоатацилеме е ăна хăйсен аллинче тытса тăма тăрăшнă чухне эпĕ вĕсем умĕнче чакма шухăшламастăп. Анчах эпĕ Инди халăхне японецсем умĕнче хăйсен хĕçпăшалĕсене пăрахтармашкăн е вĕсен агрессийĕ умĕнче нимĕн тумасăр тăмашкăн хушма пушшех те шухăшламастăп. Эпĕ—Инди халăхĕ японецсене юлашки юн тумламĕ юлмиччен хирĕç тăтăр, вĕсене конгресс кăтартса панă майпа хирĕç тăтăр, тесе тăрăшатăп. Англичансене Индире хирĕç тăрасси çине мĕнле пăхнипе Японии захватчикĕсене хирĕç тăрасси çине мĕнле пăхни хушшинче уйрăмлăх пур. Анчах та эпир, паллах, вĕсенчен пĕрне те пăхăнмăпăр».

«Хальхи вăхăтра,—тенĕ малалла Неру,—Англи правительствине шанманнипе курайманни ĕçе татса паракан фактор пулса тăрать. Ку вăл Японии майлă пыракан шухăш-кăмăл мар, вăл—Англие хирĕçле шухăш-кăмăл. Çак шухăш-кăмăл хăшпĕр чухне уйрăм çынсене Японии майлă шухăшсем калаттарма пултарать, анчах та апла пулни вăл инçетрине курма пултарайманнине кăна кăтартса панă пулĕччĕ. Вăл—чурасен сăмахĕ. Японецсем Индие ирĕке кăларăççĕ тесе индиец каланине эпĕ илтме мана питĕ йывăр. Япония кунта е империалистла туртăмсене пула, е Англи империализмне хирĕç çапăçма килет, анчах та массăсене ирĕке кăларасшăн мар».

Калаçу татăлни конгресăн Англи правительствипе çыхăнса тăрас ĕçĕнче мĕнле палăрĕ тесе ыйтни çине Неру çапла ответленĕ: «Кунта мĕн пулса иртнине пăхмасăр, эпир, паллах, Англие е кунта килме пултаракан пирĕн американец-туссене Индире вăрçă тĕлĕшпе кирлĕ ĕçсем тума кансĕрлеме шухăшламастпăр. Пирĕн çав вăрçă тĕлĕшпе тăвакан ĕçсене хăвăртрах тутарас килет. Халăх хăйĕн вырăнĕсенчен пăрахса каймасăр ĕçлесе тăтăр тетпĕр эпир».

Неру тата çапла каланă: Конгресс икĕ эрнерен хăйĕн заседанийĕнче çак ыйтăва—Англин вăрçă тĕлĕшпе тăвакан ĕçĕсене хутшăнмасăр, эпир, ирĕклĕ те никама пăхăнман Инди никĕсĕ çинче тăрса, Англие ăна хăйне вăрçă тĕлĕшпе кирлĕ ĕçсем тума мĕнле майпа кансĕрлемесĕр тăма пултарас ыйтăва сӳтсе явĕ, тенĕ.

Çĕре çунтарса хăварас политика çинчен ыйтнине хирĕç Неру çапла каланă: эпĕ çакăн пек политикăна хирĕç калакан Гандипе килĕшместĕп. «Эпĕ нацилле правительство вырăнĕнче пулас пулсан,—тенĕ вăл,—противника мĕн усă кӳме пултарать, çавсене пурне те, вĕсем камăн харпăрлăхĕ пулса тăнине пăхмасăрах, çунтарса янă пулăттăм», тенĕ.

Совет Союзĕ тăрăх

Кузнецкри сталеварсен стахановла ĕçĕ

Кузнецкри сталеварсем апрель уйăхĕнче татах та ытларах ӳссе пыракан хăвăртлăхсемпе ĕçлеççĕ. Сталин ячĕпе тăракан металлурги комбиначĕн мартен цехĕн коллективĕ 6 кунлăх плана 8 процент ирттерсе тултарнă. Стахановецсем Васильев, Чалков, Ляхов юлташсем апрелĕн 5-мĕшĕнче заданирен ирттерсе 200 тонна хурçă шăратса панă. Çав цех хурçа шăп график тăрăх шăратса кăларса пырать. (ТАСС).

Киреевски шахтăсем руда пама тытăннă

Киреевски рудниксенчи горняксем (Тула облаçĕ) апрелĕн 1-мĕш тĕлне пур шахтăсене те пĕтĕмпе тенĕ пекех юсаса çитернĕ.

Рудана кунсеренех ытларах та ытларах кăларса пыраççĕ. Забойщиксемпе проходчиксем нумайĕшĕсем нормăна кунсеренех 150—180 процент тултарса пыраççĕ. (ТАСС).

КĔСКЕН

▲ СССР потребительсен кооперацийĕ ячĕпе тăракан танксен колоннине тума Ярославль облаçĕнчи потребительсен обществисен член-пайщикĕсем 1.300.000 тенкĕ укçа хывнă. 1941 çулта илнĕ пĕтĕм тупăшпа та, мĕнпурĕ 2.000.000 тенке яхăн, вĕсем çав колоннăна тума параççĕ.

▲ Кăнтăр Казахстанра кăмпа татса хатĕрлеме пуçланă. Дарбаза совхозĕнче çамрăк кăмпана татса 15 тоннăна яхăн хатĕрленĕ те ĕнтĕ. Совхоз тăракан облаçра мĕнпурĕ 115 тонна кăмпа татса хатĕрлемешкĕн план йышăннă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, «Ленин çулĕпе» журналăн тата комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 740 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 255. Ф. 6, 58 64 п: л: